

## Маргарита ИЛЬИНА:

# Пирĕн килес...



«Ман килес, – тет пирĕн тăрăхра пурăнакан кÿрше-мĕне каçсан. – Килте пур-и?» Эпир те çапла – хаçат урлă – кашни шăмат кун вулаканăмăрсен алăкĕсенчен шаккатпăр: «Пирĕн килес...» Эсир пире яланах çапла хапăлласа кĕтсе илнĕшĕн тавах ĕнтĕ сире, вулаканăмăрсем. Кашни шăмат кун сирĕнпе пĕрле республика хыпарĕсене сÿтсе яватпăр, тĕрлĕ çынпа паллашатпăр, лайăххишĕн савăнатпăр, начарришĕн хурланатпăр. Темĕн те тÿссе ирттертĕмĕр кăçал сирĕнпе. Чăн та, савăнмалли те пулчĕ, пăшăрханмалли те – кун пирки тĕплĕн чарăнса тăмăпăр: тĕрлĕ пулăма çулталăкĕпех тĕплĕн çутатма тăрăшрăмăр. /Республикăн сулмаклă утăмĕсене вара тепĕр хут 3-мĕш страницăра пĕтĕмлетрĕмĕр/.

Çĕнĕ çул кĕрекине ларас умĕн вара мĕн калас-ха? Малтанах иртсе пыракан кивĕ çула тав тăвар: сивĕпе хăратсан та, шăрăхра çунтарсан та, юлашкинчен юр айне тума хăтлансан та çапах та ыр-сывах юлтăмăр. Çанталăка кÿренме кирлех мар-тăр – çак çĕр çинче чăн хуçа кам иккенне аса илтерчĕ кăна вăл /шкулта вĕреннĕ пек пачах та: «çакă çутă тĕнчере вăйли çук та этемрен: çĕрсем çинче, шыв çинче хуçа пулса вăл тăрать» мар иккен.../. Çанталăк ыран мĕн кăтартĕ – ĕнтĕ синоптиксем те аллисене сараççĕ кăна: кам пĕлет? Кун пек чухне çыннăн шăпах хăйĕн хăтланкаларăшĕсем пирки шухăша каймалла пек – мĕн тĕрĕс мар тăватпăр эпир? Пĕтĕм инкек хамăра пула мар-и? Такама урăххине сивличчен айăпа хамăрта шырама вĕренмелле. Хамăр лайăх пулсан пирĕнпе те ырах пулĕç – çанталăк та, кÿршĕ-аршă та, тăван-пĕтен те, юлташсем те... Çак чăнлăха ăша хывсан пурнăç та çутăрах тĕссемпе тулĕ. Шалтан тасаласчĕ, тулти таса марлăхпа та кĕрешесчĕ – пĕтĕм йăх-ях иртнĕлĕхре юлтăр, малашлăха вара çутă ĕмĕтсемпе, сывăх çынсемпе, шанчăклă юлташсемпе утăмласчĕ. Çавăн чухне кăна тăва та тепĕр май çавăрса лартмалăх вăй-хал кĕрлесе тăрĕ чунăмăрсенче, вăлах ырă ĕçсем пурнăçлама хавхалантарĕ. Унсăрăн епле-ха, тăванăмăрсем? Этем тенин хăй хыççăн çĕр çинче таса та ырă ят хăвармалла. Юлакансем лайăхпа кăна аса илччĕр кайнисем çинчен. Çакăншăн вара паянах, халех тăрăшмалла. Çĕнĕ çула савăк кăмăлпа кĕтсе илме сунатăп сире. Уяв кĕреки тулли пултăр, чунăрсенче лăпкăлăх хуçалантăр, ĕçĕрсем çитес çул татах та ытларах ăнăçчăр. Уяв ячĕпе сире!

# Пирĕнпе пĕрле...

Вăхăт тĕлĕнмелле хăвăрт иртет. Акă Тигр çулĕ те вĕçленет. Çак тапхăрта пирĕнпех пулнишĕн чунтан тав тăватпăр сана, вулаканăм!

Кăçал пирĕнпе çыхăну тытнă хастар авторсене ятхушаматран палăртса тав тăватпăр. Сăвă-поэмипе, калав-повеçĕпе Юхма Мишши, Альбина Юрату, Лидия Ковалюк, Левтина Марье, Лидия Сарине, Светлана Асамат, Сарра Баранова, Николай Теветкел, Зоя Алексеева-Сывлăмпи, Нина Пăрчăкан, Анатолий Юман, Аркадий Казанов, Осип Алексеев, Геннадий Юмарт, Александр Аслут сăвăçсемпе çыравçăсем паллаштарчĕç. Аякри тăванăмăрсен пурнăçĕпе Зоя Васильева /Кемĕр облаçĕ/, В.Симаков /Тутарстан/, Алина Ареева /Самар тăрăхĕ/ паллаштарчĕç. Владимир Платонов кроссворчĕсемсĕр вара пĕр номер те тухмасть темелле. Пирĕнпе кăçал та яланхи авторсем: Валентина Воронцова /Чĕкеç Вали/, Владимир Егоров, Александр Вишневский, Анатолий Максимов /Пукаш/, Николай Михайлов, Алевтина Николаева, Константин Портнов, Георгий Тусли, Галина Зотова, Гаврил Луç, Светлана Кудрявцева /Пилеш/, Валентина Кириллова çыхăну татмарĕç, çыру ярсах тăчĕç. Вĕсемпе пĕрлех Валентина Иванова-Тюмерова, Елена Арланова, Николай Улюков, Николай Иванов-Пархатар, Кристина Александрова, Светлана Баринова, Стелла Королева, Лев Медведев, Валентина Тарават, Виталий Ачча, Егор Васильев-Бурзай, Валентина Петрова, Алина Исаева, Николай Миронов, Ирина Иванова, Александр Трофимов, Геннадий Савельев, Анастасия Михайлова, Нина Антонова, Светлана Никитина, Муза Тимофеева, Нина Александрова, Наталия Шибаева, Валериан Александров, Р.Смирнова, Регина Чернова, Галина Петрова, Римма Степанова, Вениамин Викторов, Николай Карай, Роза Волкова, Анатолий Тимофеев, Галина Хлебникова, Любовь Федорова, Елена Николаева, Григорий Скворцов, Людмила Бахмисова, Вячеслав Михайлов, Борис Борисов, Юлия Кузьмина, Анна Шербустанова, Роза Петрова-Ахтимирова, Олеся Кувайская, Роза Горшкова, С.Улисов, Геннадий Кириллов, Валентин Прокопьев, Антонина Никитина, Зоя Куликова, Валентина Дмитриева, А.Фролов, Т.Иванова, Галина Сушенкова, Валерий Чайкин, Алевтина Никифорова, Полина Тимофеева, Василий Лапин, Николай Мышкин, Наташа Ушанкова, Елизавета Паймина, Светлана Кушникова, Алена Морозова, Алина Наумова, Вениамин Павлов, Зоя Гаврилова, Л.Никитина, Мария Александрова, Вероника Степанова, К.Тимеш, Виктор Симаков, Елена Шорникова, Геннадий Михайлов, Алексей Васильев, Петр Сидоров, Л.Никандрова, Елена Тимкина, Валентина Голубева, Николай Агаков, Нина Данилова, Евгений Храпов, Николай Мордяков, Иван Калуков, Нина Чернова, Елена Яндрова, Виталий Аршинов-Вăттавăш тата ыттисем те çыхăну тытрĕç.

Ырă çыннăмăрсем, пире манманшăн, çырупа савăнтарнăшăн тавах!

УЙРĂЛУ

# Хăй кайрĕ пулсан та...

Çак сăмахсене çырма питĕ йывăр. Мĕн тăвăн? Эпир çак тĕнчере хăнара çеç... Ытти – вĕççĕр-хĕррисĕр уçлăхра. Вилĕм кун çак инçе, юлашки çула чăваш халăхĕн мухтавлă ывăлне, Чăваш Республикин Хисеплĕ гражданинне, паллă ăсчаха, И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕн Этнопедагогика наука тĕпчев институчĕн директорне Геннадий Волков академике ăсатрăмăр.

Хурлăхлă митинга ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕ Нина Суслонова, ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕ Михаил Михайловский, министрсем, аслă шкулсен ректорĕсем, паллă ăсчахсем, общество деятелĕсем, вĕрентекенсем, культура ĕçченĕсем, Геннадий Волковăн çывăх çыннисем, тăванĕсем, ентешĕсем хутшăнчĕç.

Нина Суслонова Чăваш Ен мухтавлă ывăлĕн пурнăçĕпе ĕç-хĕлне пысăк хак пачĕ. Вăл пуçарса янă ĕç – этнопедагогика – чăвашсемшĕн çеç мар, Раççейри, тĕнчери нумай-нумай халăхшăн пĕлтерĕшлине, иртнипе паянхине тата пуласлăха çыхăнтаракан вăчăрара уйрăмах пархатарлă пулнине палăртрĕ.

– Кирек ăçта – Чăваш Енре е Германире, Калмăкра е Тывара, Кăркăсстанра е ытти вырăнта – лекци вуланă, çамрăк ăрупа тĕл пулнă – яланах халăхсен хушшинчи килĕшÿве, хутшăнусене, туслăха çирĕплетме ченнĕ, майсем шыранă. Хăйĕн хыççăн пултарулă вĕренекенсен ушкăнне хăварнă, – терĕ Нина Суслонова. – Дмитрий Лихачев ăна Никита Бичурин, Иван Яковлев ĕçĕсене малалла тăсаканĕ пек хакланă. Пирĕншĕн Геннадий Никандрович – тăван халăха парăннă çын тĕслĕхĕ.

И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕн ректорĕ Георгий Григорьев та, аслăннă университет профессорĕ Дмитрий Егоров та, Чăваш наци конгресĕн президенчĕ Геннадий Архипов та, Геннадий Волковăн вĕренекенĕ Геннадий Петров аспирант та, ентешĕ, Елчĕк район пуçлăхĕ Роза Молодова та, Шупашкар хула пуçлăхĕ Леонид Черкесов та, Чечен патшалăх университечĕн профессорĕ Шавади Арсалиев та Геннадий Никандрович пирки ăшшăн аса илчĕç.

Мухтавлă çыннăмăрăн шăллĕ, медицина ăслăлăхĕсен



докторĕ Анатолий Волков пиччĕшĕ уншăн тата тепĕр шăллĕшĕн, Зинон Никандровичшăн, вăл та паллă çын – медицина ăслăлăхĕсен кандидачĕ, кирек хăçан та тĕслĕх пулнине палăртрĕ. «Эпĕ халĕ мĕнле пур – çакăнта тетен тÿпи питĕ пысăк, – терĕ вăл. – Вăл пире те, сире пурсăра та юратнă пекех, юрататчĕ, пулăшатчĕ, сĕнÿсем паратчĕ. Эсир паян çакăнта килсе, ăна юлашки çула ăсатма хутшăнса юрату икĕ енлине çирĕплетрĕр».

Геннадий Волкова Ишлей масарĕнче мăшăрĕпе юнашар пытарчĕç.

**Надежда СМИРНОВА.**

# Сăнарĕ халăх чĕринче упранĕ

**«Савăнăçпа хуйхă пĕрле çÿреççĕ», – тесе ахальтен каламан пулĕ çав ĕмĕр пурăнса курнисем. Çĕр-шыв çыннисем Çĕнĕ çул уявне хатĕрленнĕ чухне чăваш халăхĕ пуç усать. Усă чунлă, ăслă, пултаруллă çынна çывăх çыннисем, тусĕсем ырă, ăшă сăмахсемпе çеç аса илеççĕ.**

**Светлана ПЕТРОВА, Чăваш Республикин Вĕренӳпе çамрăксен политикин министрĕн çумĕ:**

– Геннадий Волков пиртен уйрăлса кайни республикăра уйрăмах вĕрентӳ тытăмĕшĕн пысăк сухату. Геннадий Никандрович чунĕпе те, юнĕпе те шăпах çак тытăма аталантарассишĕн "çуннă". Чăваш Ен ачисем пултаруллă, ăслă, хастар пулччăр тесе ырми-канми тăрăшнă. Учительсем хăйсен ĕçĕнче халăх методикине усă курса вĕрентчĕр тесе вăл сахал мар вăй хунă. Республикăра Геннадий Никандровича пĕлмен çын çук та пулĕ. Вĕрентекенсемшĕн те вăл питĕ çывăх. Учительсем хушшинче ăна И.Я.Яковлевпа танлаштаракан та пур. Чăваш халăхĕшĕн ырă кăмăлне те, ăсне те, вăйне те шеллемен лидер темелле ун пирки. Малашне унăн ĕçĕсемпе вĕрентекенсем тата та ытларах усă курасса шанатăп.

**Марина КАРЯГИНА, поэт, тележурналист:**

– «Çитес кунсенче тĕл пулăпăр-ха». Çакă Геннадий Волков мана каланă юлашки сăмахсем пулчĕç. Нумай пулмасть, Чăваш кĕнеке издательствин юбилейĕнче.

Тĕл пулаймарăмăр... Яланхилле чăваш сăмахĕн сĕтекĕпе тăранайми каласса лараймарăмăр...

Улăпа ăсататпăр. Чăвашăн чысĕ, совеçĕ, тасалăхĕ пулса халăхăмăр чунлăхĕпе çынлăхне тĕнче курмалăх çĕкленĕ Ăсчахпа сыв пуллашатпăр. Унăн вĕрентĕвĕпе пурăнма ăс çитерсен малашне те тĕнче куçĕнчен ÿкмĕпĕр-ха. Вăл пире шанса уйрăлчĕ... Эпир пĕр-пĕрне юратса пурăнасса ĕненсе...

**Арсений ТАРАСОВ, ЧР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ:**

– Питех те шел... Чăваш хăйĕн çĕлĕк хывса сума сумалли çыннине çухатрĕ. Геннадий Никандрович Андриян Николаевпа Геннадий Айхи хыççăн юлашки çавнашкал Пысăк çынсенчен пĕри пулчĕ-тĕр. Вĕсем шăпах пирĕн халăхăн ĕмĕрсем пуçтарăннă ăсĕ, чунĕ, кăмăлĕ, сăмахĕ. Йăх пуçĕ пек, йăх ăсĕ пек.

Аслисем пулмасан вĕсем хыççăн юлакан пушăлăха ваккисем йышăнаççĕ. Пĕчĕк ăс, пĕчĕк чун аслă халăх сумне-хисепне тивĕçеймест, вăл хăй тавра пĕчĕк йыша кăна пуçтараять. Çапла пуçланаççĕ тĕрлĕ ушкăнсем, клансем, шайкăсем... Халăх пĕрлĕхĕ, пĕр кил-йыш туйăмĕ арканать, йышать.

Тепĕр ялала пирки хурланса шухăшлатăп. Пирĕн паянхи чылай пăтăрмах – шăпах паллă Ăсчахăмăр пире уçса панă, пĕрчĕн-пĕрчĕн пухса йĕркеленĕ этнопедагогикăна хамăрăн пурнăçăн никĕсĕ тумасăр пурăннинчен. Вăл Турă кĕнеки пек пулмалла пирĕншĕн.

Халĕ тин ăнланатпăр, мĕн тери тĕрĕс сăмах пулнă Г.Н.Волковăн «Яковлев патне каялла!» тени. Хамăрăн авалхи йăх-несĕлĕмĕрсем патне, хамăрăн пархатарлă кунçулăмăра тавăракан çулпа утнă пулсан паянхи кун эпир чылай ырăрах, ăсларах, вăйлăрах пулăттăмăр.

**Татьяна ШАРКОВА, ăстаçă, Çĕнĕ Шупашкарти ÿнер шкулĕн преподавателĕ:**

– Геннадий Никандрович манăн çывăх тăван. Тĕрĕссипе, тăвансен хушшинче чи ваттиччĕ вăл. Пире, хурăнташсене, пĕрлештерсе тăракан çын пулнă. Эпир ун урлă аякри тăвансем пирки кăна мар, ют халăх çыннисем пирки те пĕлеттĕмĕр.

Чăннипе, атте-анне вилнĕ хыççăн иккĕмĕш хут тăлăха юлнăн туятăп хама.

Пĕлетĕп – ăна Тутарстанра, Калмăк, Тыва, Якут, Кăркăсстан республикисенче пысăка хурса хакланă. Вăл чăваш ят-сумне тĕнче шайне çĕклес тесе нумай тăрăшнă. Тĕрĕссипе, унăн ĕçĕсене хамăр патринчен ытла ытти регионта, çĕр-шывра тивĕçлипе пысăк хак параççĕ.

Геннадий Никандрович çав тери ырă çын пулнине унпа калаçнă кашни çынах çирĕплетет. Чăвашсен çитĕнĕвĕшĕн питĕ хĕпĕртетчĕ. Нумаях пулмасть тăван ялĕнче пулса килнĕ хыççăн çапла каласа пачĕ вăл: «Атте-анне пÿрчĕ патнелле çул уçнă, урайне çуса тухнă. Манмаççĕ иккен. Пÿрчĕсем пысăк та хăтлă. Çакна курса савăнтăм. Чăваш пурнăçĕ лайăхланса пырать эппин». Чăваш Ен ÿсĕмĕсемшĕн чунран савăнатчĕ. Чĕри тăван халăхăмăршăнах тапатчĕ-ха та. Эпир те унăн çутă сăнарне чун-чĕререх упрар.

**Татьяна НАУМОВА, Надежда КУДРЯШОВА ыйтса пĕлнĕ.**